Район прокуратуринчен

Саккун вӑл пуриншӗн те пӗрре

Паянхи рубрикӑна Муркаш район прокурорӗ, юстицин кӗҫӗн советникӗ Сергей Александрович ФИРСОВ ертсе пырать

Нацпроект кун йӗркинчен тухмасть

Район хаҫатӗнче иртнӗ ҫул тӑтӑш тухса тӑнӑ «Саккун вӑл пуриншӗн те пӗрре» рубрика кӑҫал тухмасть-и? Ҫакӑн пирки прокуратура ӗҫченӗсем мӗн шутлаҫҫӗ-ши? Кунпа пӗрлех ыйтса пӗлес те килет: РФ Президенчӗ ҫул панӑ наци проекчӗсем районта иртнӗ ҫул епле ӗҫлерӗҫ-ши? Вӗсене пӑсакансем пӗлтӗр миҫе ҫын пулнӑ?

Ф. АЛЕКСАНДРОВ.

Пирӗн рубрикӑпа кӑсӑкланнӑшӑн хаҫат вулакана пысӑк тав. Рубрика хупӑнман. Ӑна кӑҫал та хаҫат ӗҫченӗсемпе пӗрле пулса тытса пырӑпӑр. Ҫавна май ҫирӗн ыйтусем те ӑна интереслӗрех йӗркелеме пулӑшӗҫ. Ф. Александров ыйтӑвне хуравласа ҫапла калатӑп: нацпроектсем епле пурнӑҫланнине тӗрӗслесси – пирӗн тӑтӑш кун йӗркинче тӑракан ыйту.

Наци проекчӗсем епле пурнӑҫланнине тӗрӗсленӗ май иртнӗ ҫул район прокуратурин ӗҫченӗсем саккуна пӑснӑ 84 тӗслӗхе тупса палӑртрӗҫ. Вӗсемпе килӗшуллӗн 11 протест тӑратма, 13 иск, 32 представлени ҫырма, 20 ҫынна дисциплинарлӑ явап тыттарма тиврӗ.

Граждансен прависене хӳтӗлес тӗллевпе «Вӗрентӳ» приоритетлӑ нацпроекта пурнӑҫланӑ май класа ертсе пырассипе тӳлев «юлса» пынине «Москакассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкул» муниципаллӑ вӗрентӳ учрежденийӗнчен суд приказӗпе шыраса илме суда 11 заявлени тӑратрӑмӑр. Прокурор ыйтӑвӗсене суд тивӗҫтерчӗ, парӑмсене татнӑ.

«Раҫҫей гражданӗсене пурӑнма хӑтлӑ тата килӗшуллӗ ҫурт-йӗр» нацпроектпа иртнӗ тӗрӗслевсем вӑхӑтӗнче районти 16 ял тӑрӑхӗнче те ҫӗрпе усӑ курмалли тата вӗсем ҫинче ҫурт-йӗр лартмалли плансен проекчӗсене туманни ҫиеле тухрӗ. Кунпа пӗрлех вӗсенче асӑннӑ проектсене хатӗрлессипе ӗҫлекен комиссисен составне тата ӗҫ-хӗлӗн йӗркине ҫирӗплетмен. Тӗрӗслев пӗтӗмлетӗвӗсемпе 16 представлени ҫыртӑмӑр, йӗрке пӑснисене пӗтертӗмӗр.

Тӗрӗслевсенче ҫакӑ та паллӑ пулчӗ. Муркаш район администрацийӗ ҫамрӑк ҫемьесем ыйтса ҫырнине пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн тунӑ йышӑну пирки ыйтакансене 10 талӑк иртсен ҫеҫ пӗлтерет. Хӑш-пӗр тӗслӗхсенче пач пӗлтерменни те паллӑ пулчӗ. Кунпа пӗрлех район администрацийӗ Правилӑсемпе пӑхман документсене ыйтни те вырӑн тупать. Подпрограммӑсене хутшӑнакансен списокӗсем пурте курмалла вырӑнта мар.

«АПК аталантарасси» приоритетлӑ нацпроект пурнӑҫа епле кӗнине тӗрӗсленӗ май 2009 ҫулта Раҫҫей Федерацийӗн Уголовнӑй Кодексӗн 159-мӗш статйипе А.Т. Васютин тата И.П. Никифорова тӗлӗшпе ҫӑмӑллатнӑ кредитсемпе тӗллевсӗр усӑ курнӑшӑн икӗ уголовнӑй ӗҫ пуҫартӑмӑр. Иккӗшӗнче те саккуна пӑсса илнӗ субсидисене шыраса илтӗмӗр. Асӑннӑ нацпроектпа пӑхнӑ ҫӑмӑллатнӑ кредитпа тӗллевсӗр усӑ курнине «Муркашри сӗт завочӗ» усӑ акционерлӑ обществӑра тата «Свобода» ял хуҫалӑх производство кооперативӗнче тупса палӑртрӑмӑр. Иккӗшӗнче те должноҫри ҫынсене дисциплинарлӑ майпа явап тыттарма тиврӗ.

Алиментӑн та вӑхӑчӗ пур

Пурнӑҫ йывӑрланни ҫемьесем арканни ҫинче те яр уҫҫӑнах курӑнать. Кунашкал чух кун йӗркине алимент тӳлесси тухать. Ҫак «ӗҫре» йӗрке тӑвассипе прокуратура 2009 ҫулта епле ӗҫленӗ?

С. КАСЬЯНОВА.

Вулавҫӑ ыйтӑвне ӑнланатӑп. Эпир кунта «Ҫул ҫитмен ачасене пӑхса ӳстерме алимент шырас ыйтусемпе ЧР Шалти ӗҫсен министерствипе, Чӑваш Республикипе ӗҫлекен суд приставӗсен Федераллӑ службин Управленийӗпе ЧР прокуратурин пӗр тӗллевпе ӗҫлесси ҫинчен» пӗрлехи Указӗпе ӗҫлесе пыратпӑр. Пӗлтӗр ку ӗҫре чылай лайӑх кӑтартусем ҫӗнсе илме май килчӗ.

Акӑ Муркаш район сучӗ В.В. Сариловран хӑйӗн 1992 ҫулта ҫуралнӑ ывӑлӗ тӗлӗшпе алимент тӳлеме йышӑну тунӑччӗ. 2007 ҫулхи февралӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 2009 ҫулхи мартӑн 1-мӗшӗччен парӑм 83000 тенкӗне ҫитсе кайнӑ. Ҫак йӗркесӗрлӗхе пӗтерме тата ҫул ҫитмен ҫамрӑкӑн саккунлӑ прависене хӳтӗлесе эпир суда тухрӑмӑр. Суд явапсӑр ашшӗнчен 98000 тенкӗ шыраса илме йышӑну кӑларчӗ. Анчах В.В. Сарилов тивӗҫлӗ пӗтӗмлетӳ тумарӗ, ӗҫе вырнаҫмарӗ, парӑмсене татассине тимлемерӗ. Ҫапла вара ун тӗлӗшпе 2009 ҫулхи июнӗн 30-мӗшӗнче РФ УК 157-мӗш статйин 1-мӗш пайӗпе уголовнӑй ӗҫ пуҫартӑмӑр. Суд В.В. Сарилова 120 сехет обязательнӑй йӗркепе ӗҫлеме йышӑну турӗ.

2009 ҫулта РФ УК 157-мӗш статйин 1-мӗш пайӗпе 14 уголовнӑй ӗҫ пуҫартӑмӑр. Кашниннех айӑплав приговорӗсем кӑларнӑ. Прокурор постановленийӗпе РФ КоАПӗн 5.35 статйипе ашшӗ-амӑшӗн тивӗҫӗсене йӗркеллӗ турнӑҫламан 20 ҫынна административлӑ майпа явап тыттартӑмӑр.

«Курильщик» операци иртрӗ

Телевизорпа наркотик курӑксем пирки нумай калаҫҫӗ. Пӗлес килет, ку ыйтупа районти йӗрке хуралҫисем ӗҫлеҫҫӗ-и?

Хаҫат редакцине шӑнкӑравланинчен.

Чӑнах та, Раҫҫей Федерацийӗн хӑш-пӗр субъекчӗсенче пируспа пӗрле туртма хатӗрленӗ наркотика хутӑшсем сутни тӗл пулнӑ. Вӗсен йышне «Шалфей предсказателей», «Гавайская роза», «Голубой лотос» кӗреҫҫӗ.

Саккуна хирӗҫлекен ҫак хутӑшсене ӳсен-тӑрансен вӗтетнӗ е типӗтнӗ пайӗсемпе, порошоксем пек (пируспа туртма хатӗр препаратсем) туса сутаҫҫӗ. Вӗсем Роспотребнадзор органӗсенче санитарипе эпидемиологи экспертизи витӗр тухман. Асӑннӑ хутӑшсене Федераллӑ саккунпа сутма чарнӑ.

Саккуна епле пурнӑҫланнине тӗрӗслессипе 2010 ҫулхи январӗн 19-21-мӗшӗсенче шалти ӗҫсен пайӗпе пӗрле «Курильщик» оперативлӑ профилактика операцийӗ ирттертӗмӗр. Ҫак вӑхӑтра пӗрлехи вӑйсемпе Муркашри пасара, аптека киоскӗсене, аптекӑсене, уйрӑм предпринимательсен магазинӗсене – пурӗ 12 объект – тӗрӗслесе тухрӑмӑр. Оперативлӑ профилактика операцийӗнче районта маларах асӑннӑ хутӑшсене сутни палӑрмарӗ.

Выльӑх пӑхакансен пӗрлехи кунӗнчен

Ыранхи кун производствӑпа ҫыхӑннӑ

Иртнӗ юн кун районти ял хуҫалӑх предприятийӗсенче выльӑх пӑхакансен пӗрлехи кунӗ иртрӗ. Ҫавна май фермӑсем епле хӗл каҫнине пӑхса хаклама пур хуҫалӑхсене те район администрацийӗн яваплӑ ӗҫченӗсем ҫитсе килчӗҫ.

«Герой» ял хуҫалӑх производство кооперативӗпе «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрики» усӑ акционерлӑ обществӑра район администрацийӗн капиталлӑ строительствӑпа архитектура тата пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх управленийӗн тӗп специалисчӗсем Николай Конновпа Николай Звонков ҫитсе килчӗҫ. Ҫакна каласа хӑвармалла, асӑннӑ хуҫалӑхсем районти тата республикӑри ял хуҫалӑх предприятийӗсемшӗн те хӑйне евӗр тӗслӗх пулса тӑраҫҫӗ. Хӑйсен малтурӑмлӑ ӗҫӗпе вӗсем районӑн пӗтӗмӗшле аталанӑвне те ҫул уҫса пыраҫҫӗ.

РАЙОНТА

Муркаш енри ӗҫченсем хӑйсен пултарулӑхӗпе вунӑ ҫул ӗнтӗ республикӑра ырӑ ят тытса тӑраҫҫӗ. Ҫакна пӗлсе тӑрса паян районти обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх патӗнче ӗҫлекенсен иртнӗ ҫулхи ӗҫ-хӗлне пӗтӗмӗшле пӑхса тухсан та ытлашши пулас ҫук. Кунта вара хӗпӗртемелли те, кая юлмасӑр татса памалли те, туса ҫитерейменни те ҫук мар. Ҫакна виҫсе хак парасси пулчӗ те ӗнтӗ выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансен пӗрлехи кунӗн тӗллевӗнче. Кунпа пӗрлех обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх отраслӗ епле хӗл каҫни те интереслентермесӗр тӑраймасть паян. Йӑлтах туса ҫитернӗ-и-ха эпир выльӑхран хӗл тапхӑрӗнче ҫителӗклӗ продукци туса илме? Ҫак ыйту ҫине пӗлтӗрхи ӗҫ-хӗл пӗтӗмлетӗвӗсем тулли хурав параҫҫӗ. Вӗсемех малашлӑх никӗсӗ пулса тӑраҫҫӗ. 2009 ҫулта районти пӗрлешуллӗ хуҫалӑхсем усӑ куракан 100 гектар ҫӗр пуҫне 47 центнер ашкакай (виҫӗм ҫулхин 97,4 проценчӗ), 290,7 центнер сӗт (127,9 процент) туса илнӗ. Аш-какай туса илесси пӗтӗмӗшле чакнӑ пулсан (2124 тоннӑран 1490 тоннӑна ҫити), сӗт сӑвасси те районӗпе каялла утӑмланӑ (10008 тоннӑран 9211 тоннӑна ҫити). Пӗтӗмлетӳсем пирки калас пулсан, пӑрусемпе сысна ҫурисем илни ҫинчен те каласа хӑвармалла, мӗншӗн тесен вӗсем пулас кӗтӗвӗн тӗп никӗсӗсем. Анчах кунта та ял хуҫалӑх ӗҫченӗсем тивӗҫлӗ пӗтӗмлетӳсем туса ҫанӑ тавӑрса ӗҫлемелли чылай. Ҫакна ҫеҫ калас килет: паянхи производство ыранхи кунпа ҫыхӑннӑ.

ХУҪАЛӐХСЕНЧЕ

Эпир пулса курнӑ хуҫалӑхсенче ытларах ыранхи кун пирки шутлани куҫ умне пулнӑран, районта ҫӗнӗ технологисемпе хӗҫ-пӑшаллансе аталаннӑшӑн ҫӗнӗ картлашкисене ҫӗнме ӑнтӑлакансем те пурри савӑнтарчӗ кӑна. Ҫак кун «Герой» хуҫалӑхра та, «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикинче те юсавҫӑсен бригадисем пуррине тата вӗсем сарайсемпе цехсенче юсав ӗҫӗсене ирттерсех тӑнине тӗл пултӑмӑр. Пур ҫӗрте те шыв пӑрӑхӗсемпе тислӗк кӑлармалли транспортерсем юсавлӑччӗ. Шурчара комбикорм установки, чӑх-чӗп фабрикинче икӗ кормоцех ӗҫлетчӗҫ. Фермӑсемпе фабрика территорийӗсенче тирпейлӗхпе тасалӑх хуҫаланни кунта хӑйсен ӗҫне чунӗпе парӑннӑ ӗҫченсем вӑй хунине ҫирӗплетрӗ кӑна. Икӗ ӗҫ коллективӗнче те эпир пулнӑ кун тӗлне ӗҫ укҫи парассипе парӑмсем ҫукчӗ, ӗҫлекенсене ӗҫ тумтирӗсемпе тивӗҫтернӗччӗ, хӑрушсӑрлӑх техникипе инструктажсем ирттерсе ҫакӑн пирки журналсене ҫырса хунӑччӗ. Уйрӑм ӗҫ кӑтартӑвӗсемпе илсен, «Герой» хуҫалӑхра усӑ куракан 100 гектар ҫӗр пуҫне пӗлтӗр 197,9 центнер аш-какай (унчченхи ҫулхин 187 проценчӗ), 1460 центнер сӗт (203 процент) туса илнӗ. Ҫулталӑк хушшинче кашни ӗнерен вӑтамран 4819 килограмм (районӗпе – 4116 кг) сӗт сунӑ, 100 ӗне пуҫне 84 пӑру, пӗтӗмпе 1080 сысна ҫури илме мехел ҫитернӗ. Кунти мӑйракаллӑ шултра выльӑх пӗлтӗр талӑксерен 544 грамм, сыснасем 370 грамм ӳт хушнӑ. Ҫак кӑтартусем пурте районта лайӑххисен шутӗнче.

«Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикинче ҫӑмарта илесси пӗлтӗр 7454,4 пин штук хӑпарнӑ, фабрика ӗҫченӗсем пурӗ 57004,4 пин ҫӑмарта илме пултарнӑ. Ҫакӑ вӑл пӗр чӑх пуҫне ҫулталӑкне 331 ҫӑмарта илнипе тӳр килет. Танлаштарма, 2009 ҫулта – 324 штук ҫӑмарта. Кунпа пӗрлех фабрикӑра чӑхсен йышне те ҫулталӑк хушшинче 19286 пуҫ ӳстерсе вӗсен хисепне 172218 пуҫа ҫитернӗ. Ҫакӑ вӑл чӑх-чӗп отраслӗ ҫирӗп аталану ҫулӗ ҫинчи пирки калать.

А. БЕЛОВ.

Килти хушма хуҫалӑх

Хӗллехи нӳхреп

Урамра сивӗ хӗл кунӗсем тӑраҫҫӗ пулсан та, нӳхрепре сывлӑш температури 2-4 градус ӑшӑ, нӳрӗк виҫи 90-95 процент таран пулмалла. Ҫакӑ урама хунӑ ҫимӗҫсене йӗркеллӗ хӗл каҫарма пулӑшать. Нӳхрепри сывлӑша уҫӑлтарма ятарлӑ шӑтӑк (вытяжка) кирлӗ. Сивӗре ӑна хупламалла, шартлама сивӗсем вӑхӑтӗнче тӗппипех питӗрме те юрать.

Ҫанталӑк ӑшӑтсан, ҫак шӑтӑка пӗр сехетлӗх е ытларах уҫмалла. Сывлӑш нӳхрепре питӗ нӳрӗ пулсан, ещӗксемпе типӗ известь лартмалла. Нӳхрепре ытла типӗ чухне унта шывлӑ савӑт вырнаҫтарни вырӑнлӑ.

Юр айӗнчи садра

Юлашки вӑхӑтра юр нумай ҫурӗ пулсан та, хӗвел питтинче вӑл хӑвӑрт пусӑрӑнать. Ҫавна пула сад-пахчари йывӑҫ тунисем ҫараслса юлаҫҫӗ. Ҫакӑ вӗсене сӑнама май парать: йывӑҫ-тӗмсене кӑшлакан чӗр чунсем сиенлемен-и? Ҫамрӑк туратсене мулкачсем кӑшланӑ пулсан, вӗсене секаторпа ҫӗнӗ папка тухмалла туса е турата айккинелле ӳсмелле майлаштарса касса илмелле.

Шӑшисем кӑшланӑ вырӑнсене ҫийӗнчех сиплемелле. Ҫакна валли вӑл вырӑнсен хӗррисене тасатмасӑр сад варӗ сӗрсе хумалла. Вӑл йывӑҫа типсе каясран упрать. Кӑшланӑ вырӑн пысӑках мар пулсан, вӑл хӑех «тӳрленет».

Шӑтаслӑхӗ пӗтмест

Помидор вӑррин шӑтаслӑхӗ нумай ҫул упраннипе уйрӑлса тӑрать. Тӗслӗхрен, лайӑх питӗрӗнекен савӑтра (пӑрса хупмалли банкӑра) упраннӑ вӑрлӑх 15 ҫул иртсен те лайӑх шӑтать. Анчах ун пек чух савӑта пӗрре те уҫмалла мар.

Пӗр пек температурӑпа (18-22 градус) нӳрӗк тӑракан вырӑнта вӑрӑ 7-10 ҫул упранма пултарать. Хутса ӑшӑтман вырӑнта, температурӑпа нӳрӗк улшӑнса тӑракан ҫӗрте вӑрлӑх шӑтаслӑхӗ 5 ҫул ҫеҫ упранать.

Кӗҫех вӑрлӑх акмалли вӑхӑт ҫывхарать. Акмашкӑн, тӗпрен илсен, 3 ҫултан иртмен вӑрлӑхпа усӑ курмалла.

А. СЕМЕНОВ,

«Россельхозцентр» ФГУн ЧР филиалӗн районти уйрӑмӗн тӗп специалисчӗ.

01 2009 ҫула пӗтӗмлететпӗр

Пушар хӑрушлӑхӗ ҫивӗчленет

Вӑхӑт хӑй уттине самантлӑха та чакармасть. Нумаях та пулмасть Ҫӗнӗ ҫула хатӗрленеттӗмӗрччӗ, паян вара ҫывхаракан ҫур аки пирки шутлама вӑхӑт. Ӗҫсем малалла кайни савӑнтарать, анчах хамӑр вӑй шеллемесӗр тунӑ пурлӑха самантлӑха тимлӗх ҫухатса кӗл туни – кирек камшӑн та пысӑк ӳывӑрлӑх. Пушар хӑрушсӑрлӑхӗпе пӑхсан иртнӗ ҫул мӗнпе асра юлчӗ-ха? Ҫак ыйту ҫине хурав шыраса хамӑр тӗпеле паян районти патшалӑх пушар надзор уйрӑмӗн пуҫлӑхне Илья Николаевич СМИРНОВА чӗнтӗмӗр.

– 2009 ҫул чрезвычайлӑ лару-тӑрусем кӑларса тӑратнӑ пушарсем енӗпе епле иртрӗ? Мӗн ҫине ытларах тимлӗх уйӑрмаллине кӑтартрӗ вӑл?

– Пушар хуралӗшӗн ку ҫулталӑк та йывӑррисенчен пӗри пулчӗ. 2008 ҫулпа танлаштарсан, пӗлтӗр пушар тухаслӑх та, вут-ҫулӑм кӳнӗ тӑкаксем те чылай ытларах пулчӗҫ: инкексем 26-ран 37-не ҫитрӗҫ, пурлӑх кӗлленесси 2 хут майлӑ ӳсрӗ, уннченхи ҫулсен пекех ҫулӑмра икӗ ҫын пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр татӑлчӗ. Вӗсемпе пӗрлех пӗр ҫын пӗлтӗр пиҫсе кайрӗ, пулӑшу вӑхӑтра ҫитнипе ҫеҫ унӑн пурнӑҫне ҫӑлса хӑварма май килчӗ. Каламалла, ҫынсен ӳсӗрле пирус туртнине инкеке лекрӗҫ. Кунсӑр пуҫне «хӗрлӗ автан» тыткӑнӗнче пурнӑҫран уйрӑлнисем – аслӑ ӳсӗмри ҫынсем: апрелӗн 23-мӗшӗнче Москакасси ял тӑрӑхӗнчи Хачӑк салинче пулнӑ пушарта 1917 ҫулта ҫуралнӑ И. Шувалов пурнӑҫӗ татӑлчӗ, чӳк уйӑхӗн 7-мӗшӗнче Шетмӗпуҫ ял тӑрӑхӗнчи Опрыскъялӗнче тухнӑ пушарта – 1935 ҫулта ҫуралнӑ Р. Егоровӑн. Ирӗке кайнӑ ҫулӑмпа кӗрешме кашнинчех планпа пӑхнӑ вӑйсене туллин явӑҫтартӑмӑр пулин те, «хӗрлӗ автан» тыткӑнне лекнисен пурнӑҫне ҫӑлса хӑварма май килмерӗ.

– Эпӗ шутланӑ тӑрӑх, пулнӑ инкексем ӑнсӑрт пуламсем мар. Вӗсенчен асӑрханма пӗлтӗр мӗн туса ҫитерейрӗмӗр эпир тата малашне ку тӗлӗшпе мӗн тумалла?

– Паллах ӑнсӑртран мар. Акӑ пӗлтӗр район территорийӗнче пулнӑ 37 пушартан 34-шӗ ҫынсен килти хуҫалӑхӗсенче пулчӗҫ тата вӗсенчех, каларӑм ӗнтӗ, 2 ҫын пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр татӑлчӗ. Мӗнре-ха пушарсен сӑлтавӗсем? Эпир тӑвакан тишкерӳ ҫакна кӑтартать: 2009 ҫулта усӑ ҫулӑмпа усӑ курнӑ чух (пирус туртни те ҫавӑнта кӗрет) асӑрханусӑр пулнипе 7, электрооборудование эксплуатацилессинче техника правилисене пӑснипе 15, кӑмакасемпе усӑ курнӑ чухне пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене пӑснипе 3 хутчен «хӗрлӗ автан» алхасрӗ. Ҫак инкексенче 12 пурӑнмалли ҫурт, 11 хуралтӑ, 6 мунча, 1 лаҫ, 1 автомашина ҫунса кӗлленчӗҫ. Кӑмакасемпе усӑ курнӑ чухне пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене пӑснипе 3 пушар тухнине уйрӑммӑн палӑртса хӑварас килет: виҫӗ инкекӗ те мунчасенче пулчӗ. Каламалла, ку сӑлтавпа кӑҫал та 3 пушар тухма ӗлкӗрчӗ ӗнтӗ.

Вырӑнти самоуправлени ҫинчен калакан Федераллӑ саккун ял тӑрӑхӗсенче пушар хӑрушсӑрлӑхӗ ҫине ҫирӗпрех пӑхма ыйтать. Ҫакӑ вӑл пушар хуралне тытса тӑрасси, агитаци ӗҫне анлӑн ирттерессине, эрех-сӑрапа иртӗхекенсен ҫемйисене тата пӗччен пурӑнакансене шута илесси. Юлашкинчен асӑннисен списокне туса вӗсене районти шалти ӗҫсен пайне, патшалӑх пушар надзорӗн районти уйрӑмне ҫитерсе памалла, вӗсем тӗлӗшпе ӗҫсем тӑтӑшах ҫыхӑну йӗркелемелле. Кунпа пӗрлех ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен асӑннӑ ҫынсен хуҫалӑхӗсене тӗллевлӗ тӗрӗслесе тӑма график туни те пушарсен ҫулне пӳлечӗ ҫеҫ.

Профилактика тенӗрен, ял тӑрӑхӗсем вырнаҫнӑ ҫуртсем патӗнче пушартан асӑрханма ыйтакан курӑмлӑ материалсен стенчӗсене йӗркелемелле, ял старостисемпе пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене алла илессипе вӗрентӳсем ирттермелле, эрех-сӑрапа туслӑ ҫемьесене пушар хӑрушсӑрлӑхӗ енӗпе час-часах тӗллевлӗ тӗрӗслессине практикӑна кӗртмелле, патшалӑх пушар надзорӗн инспекторӗсене хапӑхса тӗл пуласине йӗркелемелле.

– Пушарпа кӗрешесси пӗр ҫын ӗҫӗ мар. Ведомствӑлла пушар хуралӗсем пирки мӗн калама пултаратӑр? Чылай ҫӗрте ун ҫине алӑ сулчӗҫ тесен те пысӑк йӑнӑш пулмӗ. Ҫапла мар-и?

– Кӑна эсир тӗрӗсех каларӑр. Пушар хӑрушсӑрлӑхӗнчи ҫӗнӗлӗхсем ҫине вырӑнсенче ҫӗнӗлле пӑхма пуҫласса эпир питӗ кӗтетпӗр, анчах... Нумаях пулмасть районти 26 ял хуҫалӑх предприятийӗсен кашнинче майлах ведомствӑлла пушар хуралӗсем пурччӗ пулсан, паян «Волга», «Герой», «Свобода», «Ударник», Суворов ячӗ хис. хуҫалӑхсемпе «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикинче кӑна пушар хуралӗсем ҫула тухма хатӗр лараҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах Юнкӑ ял тӑрӑхӗнче «Моргаушская» МСО территорийӗнче ларакан, «Передовик», «Оринино», «Восток» хуҫалӑхсен гаражӗсенчи юсавлӑ пушар машинисемпе водительсен дежурствине йӗркелеменни пушар хуралӗ ҫине пысӑк ҫӑра ҫактарнӑ.

Муркаш район халӑхӗ ӗҫлеме пултарать, ӗҫленине вут-ҫулӑмран упрасси ҫине тимлӗрех пӑхсан тата лайӑхрах пулмалла.

А. БЕЛОВ калаҫнӑ.